Çур аки - 2010

# Технологипе тухăç пĕр урапара

Пĕр тенкĕ хурса çĕр тенкĕ тупăш илесси – кирек епле ĕçĕн те тĕп шăнăрĕ. Çав тĕллевпе паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вăй хуракан хресчен иртен пуçласа сĕм çĕрлеччченех е икĕ сменăпа лăш чарăнмасăр çуртрисем акма çĕр хатĕрлет, кунĕпе хирте тырă акать, çĕр улмипе пахча çимĕç лартать. Уй-хир ĕçĕпе хуçалăх экономикине тĕреклетессишĕн тăрăшакансем вара технологи пĕлтерĕшне паян малти вырăна кăларнине палăртма кăмăллă.

Вăхăт уттипе тан пырса калаçас пулсан, хуçалăхсенче çур аки ĕçĕсем мĕнле хăвăртлăхпа пынине хире тухса пăхмалла. Çак тĕллевпе иртнĕ кунсенче Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне çитрĕм. Трактор паркĕнче шăплăх хуçаланни Анаткассисемпе Тушкассисем паян пĕтĕм вăя уй-хир ĕçĕсене явăçтарни пирки евитлерĕ.

Хире тухрăмăр. Тушкасси вĕçĕнчи уйра инçетренех тусан тăнине куртăмăр. Апла пулсан унта тракторсем ĕçлеççĕ. Чăнах çапла иккен. Виçĕ çул каялла пурнăçа кĕртнĕ мăшăр сеялкăсем юлашки 1-2 çулта туяннă çĕнĕ МТЗ-82 тракторсем хыçĕнче «выляса пыраççĕ» кăна. Акă вĕсем тăвată агрегат пĕрпĕринпе ăмăртса тенĕ пек сеялкăсене тырăпа тултарма пырса çитрĕç. Сăмах май, юлашки çулсенче асăннă хуçалăх минераллă удобренисенчен пач пăрăнчĕ. Экологиллĕ таса продукци – Анаткассисен умра тăракан тĕп тĕллевĕ. Юнашар хирте вара юлашки лаптăксене акана хатĕрлессипе Валерий Добрянский агрегачĕ ĕçлет.

– Механизаторсемпе акаçăсен тăрăшулăхне пула çур аки пĕр самантлăха та чарăнса тăмасть. Иртен пуçласа каçчен хирте пулас тухăç никĕсне хывса хăварассишĕн хĕрӳ кĕрешӳ пырать. Эпир кăçалхи ĕç çире тырă-пулăна вăхăтра акнипе пĕрлех çум курăкĕпе кĕрешессине те пĕр шая кăлартăмăр. Нӳрĕк вăхăтра сыхласа хăварнă хирсенче пуç çĕклеме пуçланă çум курăка паян вататтăр. Çакă та пулас тухăç çинче палăрасса шанатпăр, – тет пире ака агрегачĕсем патĕнче ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ Галина Албутова агроном.

Хатĕр пултăмăр-и-ха эпир паянхи оперативлăха? Вăхăт çитсен, кӳршĕри хуçалăхсем çур акине тухса кайсан, сӳре агрегачĕ патне пĕрремĕш хут гайка çăраççине йăтса пыракан хресчен пирки вăл малашлăха çирĕп пăхать тесе епле калайăн-ха? Кун пек ĕçлекене, каçарăр та, нимĕнле наци проекчĕ те аталану çулне уçса параймасть. Çапла шутлать паян Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи В. С. Андреев. Анаткассисен мехпаркĕнче те, çурхи уй-хирте те унăн шухăшне хирĕçлемеççĕ, яра куна çанă таврăрса ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшаççĕ.

Хуçалăхăн çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе çуртрисене пĕтĕмпе 711 гектар акмалла. Паян ку ĕçсем пĕр çул ӳсекен культурăсем акнипе вĕçленсе пыраççĕ ĕнтĕ. Акара, тĕпрен илсен, йăлтах çĕнĕ сортсем пулни хуçалăх ыранхи кунпа пурăннине çирĕплетет кăна.

Пĕр çын сурать – типсе пырать, çĕр çын сурать – кӳлĕ пулать. Пурсăмăр та ачаран пĕлекен çак чăнлăх Суворов яч. хис. хуçалăхра паян ĕçре. Вăл никамăн питне те ан хĕреттĕр тесе кооперативра тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса панă. Хирте ĕçлекенсем паян тӳлевсĕр майпа кунне иккĕ апатланаççĕ. Çĕрлехи сменăра ĕçлекен трактористсем ĕçе тухиччен кулленех 50-шар тенкĕ укçа илеççĕ.

– Укçа илетпĕр те çĕрле апатланмалли çимĕççене магазинтан илсе трактор штурвалĕ умне ларатпăр. Ĕç условийĕсем тивĕçтернĕрен илнĕ укçа-тенкĕне эрех-сăра çине яман, – каласа парать çĕрлехи сменăран киле каякан Василий Яковлев механизатор.

– Ĕç условийĕсем тенĕрен, çур акине хутшăнакансене пурне те хуçалăх çур хакпа 10-шар килограмм аш пачĕ. Çакă та хăйне евĕр хавхалантару, – сăмах хушрĕ ыттисемпе пĕрлех уй-хир ĕçĕсенчен таттăлмасăр ĕçлекен Геннадий Васильев бригадир. Унпа юнашар тăракан Геннадий Викторов инженер-механизатор епле чăтни-тӳсни пирки вара тĕлĕнмелли çеç юлать. Тĕп инженер ĕçне пурнăçланипе пĕрлех çур акире çĕрĕпе çĕр хатĕрленĕ, анчах нихăш ĕçре те хуçалăх ĕçченĕсем умĕнче ят яман.

Эпир калаçнă хушăра сеялкăсене тырă тултарнă В. Григорьев, В. Сергеев, А. Михайлов, И. Николаев, В. Орлов, А. Гордеев, О. Албутов, Н. Важоров, В. Иванов, В. Олгашов, С. Лопатин, В. Кириллов кăшт уçă сывлăш çавăрса илчĕç. Тусанланнă питсенче ăшă кулă пурри вара пирĕн калаçура тĕрĕслĕх çеç иккенне çирĕплетрĕ.

Хир тăрăх малалла каятпăр. Тĕп агроном иртнĕ эрнере акнă урпа пуссинче чарăнчĕ.Машинăран тухса тăпра сийне алăпа тĕкĕнтĕмĕр кăна, куç умне самай сăмсаланнă урпа пĕрчисем тухса выртрĕç. «Эпир çĕр ĕçĕнче тарăн тымар янă хресченсем, – тесе пĕтĕмлетрĕ пирĕн вăрăма тăсăлнă калаçăва Галина Никандровна. Хăй çавăнтах ака йĕрĕ çинчи уçăлнă тырă пĕрчисене тăпрапа хупласа хучĕ. – Çумăр кирлĕ та-ха паян».

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕç технологийĕпе пулас тухăç пĕр урапара пулни, уншăн пурте пĕрле тăрăшни пире ырă шанчăкпа хиртен ăсатрĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**Федор Журавлев, Николай Ивашкин, Александр Архипов, Юрий Орлов механизаторсем çур акире ответлăхпа палăраççĕ.**




**Василий Яковлевпа (сулахайри) Валерий Добрянский звеньевой. Çур акине хутшăнакан пуян опытлă механизаторсем вĕсем. Валерий Федорович, тĕслĕхрен, кăçал 36-мĕш çур акине тухрĕ. Çак ĕç стажĕн 33 çулне тăван ене халаллана механизатор «хир карапĕпе» вырмара пулнă. «Виçĕ тракторпа 6 сын икĕ сменăпа çĕр хатĕрлерĕмĕр», – терĕ черетлĕ ĕç кунĕ пуçлакан В. Добрянский.**



**Виçĕ çул каялла пурнăçа кĕртнĕ мăшăр сеялкăсем юлашки 1-2 çулта туяннă çĕнĕ МТЗ-82 тракторсем хыçĕнче «выляса пыраççĕ» кăна.**

Шалти ĕçсен пайĕнчен

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи кăларăма Муркаш районĕпе ĕçлекен шалти ĕçсен пайĕн дознани ушкăнĕн аслă дознавателĕ Л.А. ЯДЫКОВА ертсе пырать.***

## Эрех ĕçес килнĕ те...

**Ака уйăхĕнче Ильинкăра В. Вальков ял магазинĕнчен хăй ирĕкĕпе пĕр кĕленче эрех «йăкăртнăччĕ». Çакă сутуçăсем умĕнчех пулнăран арçын саккун умĕнче ответ тытрĕ-ши?**

**Ильинка ялĕнче пурăнакансем.**

Районти саккун йĕркелĕвĕнче, пытармастăп, кунашкал преступлени пулнăччĕ. Ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче ялта пурăнакансем хушшинче ытти чух йĕрке пăсассипе палăрман, унччен судпа айăпланман 47 çулхи арçын кăнтăр вăхăтĕнче ял магазинне кивçенле эрех илме кĕрет. Магазин вăл кӳршĕ хĕрарăмĕ мар çав. Хайхискер кивçен ыйтнине сутуçăсем тивĕçтерменрен, хăй ирĕкĕпех сентре çинчи 214 тенкĕ тăракан пĕр литрлă «Братья Таланцевы» шур эрехе алла илсе хул хушшине хĕстерет. Сутуçă хĕрарăм патвар арçынна мĕн тăвайтăр ĕнтĕ? Çийĕнчех шалти ĕçсен пайне пĕлтерет. Ĕç тăруках кунашкал çаврăнса тухасса шутламан В. йĕрке хуралçисем хăйне серепене илсен айăпне пĕтĕмпех йышăнать, анчах... Пăравус иртсе кайнă ĕнтĕ. Халĕ ялта усал ят сарман, килти хушма хуçалăхра пахча çимĕç туса илессипе иртен пуçласа каçчен вăй хуракан арçыннăн хăйĕн вăйне РФ саккунĕ умĕнче кăтартма тивĕ.

## Икĕ «ĕç» çул уçрĕ

**Çынсем преступлени тунине ăнланма йывăр пулсан та, районти йĕрке хуралçисем пĕр çын тĕлĕшпе кĕске вăхăтрах икĕ е ытларах уголовнăй ĕç пуçармалли преступленисемпе тĕл пулаççĕ-и?**

**И. БОГДАНОВ.**

Сайра пулсан та, вулавçă хускатакан тĕслĕхсем те пирĕн практикăра тĕл пулаççĕ. Пĕр тĕслĕхпе паллаштарам. Ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче 20 сехет тĕлĕнче Пиккикасси ялĕнче пурăнакан А. Шебалов хăйĕн аппăшĕпе килĕшӳ çуккипе сиксе тухнă хирĕç тăрура аппăшне – И. Леонидована ыраттарас тата хĕсĕрлес тĕллевпе пуканпа тĕрлĕ çĕртен çапса пĕтерет. Çапла вара А. Шебалов РФ Уголовнăй Кодексăн 116 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тăвать. И. Леонидова хирĕç чĕннĕ хыççăн «паттăр» арçын хĕрарăма татах ытларах хăратса «шăплантарас» тĕллевпе мăйран ярса илет те «вĕлеретĕп!» тесе çӳçентерет. И. Леонидова А. Шебаловпа пĕр пӳртре пурăннине пăхсан, хĕрарăм епле хăранине ăнланма йывăр мар. Çапла вара вăй питти арçын кĕске хушăрах тепĕр уголовнăй ĕç «ĕçлесе» илет. Кунашкал хăратушăн халĕ унăн РФ Уголовнăй Кодексăн 119 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленишĕн явап тытма тивет. Кĕçех ку ĕçе район сучĕ пăхса тухĕ.

## Çут çанталăка сыхламалла

**Июнĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕ тухиччен пулă тытма юрамасть теççĕ. Анчах пулă сутакансене курма пулатьха. Çавнашкал браконьерсем тĕлĕшпе йĕрке хуралçисем мĕнле ĕçлеççĕ-ши?**

**И. САСТУРИН, В. ПРОШКИН.**

Вулавçăсен ыйтăвĕ питĕ пĕлтерĕшлĕ те вырăнлă. Çакнашкал ыйтăва хускатакансем хăйсем çут çанталăк тусĕсем пулни пирки манăн пĕр иккĕленӳ те çук.

Браконьерсем тенĕрен. Вĕсемпе кĕрешесси те пирĕн кун йĕркинчен самантлăха та тухмасть. Йĕрке хуралçисем кăçалхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче 19 сехет те 25 минутра Мăн Шашкар тĕлĕнчи Атăл шывĕ çинче черетлĕ браконьера тытса чарчĕç. 25 çулхи Е. Морозов пулă тытма юраманнине пĕлсех çав кун хăйĕн киммипе Атăл çине пулă тытма тухать. Ирĕк илмесĕр «ĕçе» кӳлĕннĕ пулăçă çав кун 60 метр тăршшĕ сеть карса саккуна пăссах килти хушма хуçалăх валли 5 штук хĕрлĕ куç (плотва) тытать. Анчах çак тухăçпа хăй те саккун серепине кĕрсе ӳкет. Ун тĕлĕшпе РФ Уголовнăй Кодексăн 256 статйин 1 пайĕн «б» пунктĕнче пăхнă преступление тунă тесе уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Хамăрăн постановлени копине район прокурорне ярса патăмăр.

## Шкул территорийĕнче?

**Ака уйăхĕн пуçламăшĕнчеччĕ пулас, Калайкасси шкул территорийĕнче икĕ арçын тӳпелешнине асăрханăччĕ. Шутлаççĕ-ши вĕсем хăйсем шкул ачисене мĕнле тĕслĕх пани пирки?**

**А. СЕМЕНОВА.**

Ачасене тĕрĕс воспитани парасси – пирĕн обществăн тĕп тĕллевĕ. Ку ĕçре шкул та, çемье те, ял халăхĕпе предприятисемпе организацисем те хăйсен яваплăхне туймалла. Анчах вулавçă хускатнă тĕслĕхре ответлăха туйни иккĕмĕш вырăна тухса ӳкнĕ. Халĕ çав инкекшĕн айăпла çынна обществăри йĕркелĕхе РФ Уголовнăй Кодексăн статйи урлă ăнлантармалла пулать. Çак преступленишĕн айăпла М. тĕлĕшпе эпир уголовнăй ĕç пуçартăмăр, кун пирки район прокурорне пĕлтертĕмĕр.

## Çул çинчи хирĕçу

**Ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче каç пулттипе Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕ патĕнче Ш. гражданин юлташне хĕнени пулнăччĕ. Кун пирки йĕрке хуралçисем пĕлеççĕ терĕç, ĕç мĕнпе вĕçленчĕ-ши?**

**Шупуçĕнче пурăнакансем.**

Çапла, «Автанкасси – Муркаш – Чикме» автоçул çинчи Шупуç ялĕ патĕнче асăннă кун саккуна пăснă кунашкал тĕслĕх пулнă. Инкек тӳсекен республикăри куç больницине лекнине шута илсе асăннă преступленин обществăлла хакĕ пысăкран айăпли тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Мĕн патне çитĕ «паттăр» – кун пирки вăхăт çитсен вулакансене пĕлтерĕпĕр.